Ыран – Инвалидсен пĕтĕм тĕнчери кунĕ

# Юхтăр сăввăм, чĕре уççи



Пирĕн хушăра тĕрлĕрен интереслĕ, пултарулă, унтан та кирлĕрехxи, пурнăçа хаклама пĕлекен çынсем пурăнаççĕ. Çавăн йышшисенчен пĕри вăл – Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи Татьяна Борисовна Васильева. Эпĕ ăна тахçанах аван пĕлнĕрен, унăн сăввисемпе паллашма тӳр килнĕрен, курса калаçма шутларăм. Эпĕ тӳрех хама кăсăклантаракан ыйтăва патăм. “Мĕнрен пуçланнă-ха сăвăсем çырасси, темшĕн тата чылайăшĕ ытла та хурлăхлăн куçа шывлантараççĕ?” – терĕм. Вăл манăн ыйтăва кĕтнĕ, пĕлнĕ пекех тӳрех хуравларĕ.

– Акă манăн сăвăсен пуххи, эпĕ вĕсене тахçанах çырма пуçланă. Вĕсем хурлăхлă кĕвĕленни, паллах, манăн кунçулпа çыхăннă. Пурнăç урапи манăн тикĕс кусаймарĕ. Йывăр чир хăйĕн çинчен тăтăшах аса илтерсех тăчĕ. Шкула аванах вĕренсе пĕтертĕм. Ĕмĕтсем вара пысăкчĕ. Шухăшăмпа çутă малашлăха тĕлленеттĕм. Ятарлă профессие алла илтĕм. Крыма ĕçлеме каймаллаччĕ, анчах шăпам урăхларах килсе тухрĕ. Çапах та этем çĕр çинче чи вăйли мар иккен тесе пĕтĕмлетӳ турăм. Мĕнех, çут пуласлăха ĕнентĕм, анчах кăлăхах.

Вăхăт кайнăçемĕн, нумай çулсем хушши кĕтнĕ хыççăн, Наташа хĕрĕм çуралчĕ. Халĕ вăл вун икĕ çула çитрĕ. Ӳссен хамăн тĕрек пулĕ-ха тесе шанăччĕ... Çапах та эпĕ кун-çул таппипе çырлахатăп. Мĕнех, тен, Турри çапла çырнă-и? Çĕр çинче тĕрлĕрен шăпа, кун-çул. Атăл шывĕ урлă ишсе каçнă пулсассăн, тен, пулĕччĕ урăхларах шăпам, тенине тăтăшах аса илетĕп те, чуна пусарма çырнă сăввăмсене вулатăп, малалла шăрçалама тăрăшатăп. Астăватăп-ха, район администрацийĕнче Элĕкпе Муркаш инваличĕсен тĕл пулăвĕ пулнăччĕ. Эпĕ вара хамăн сăввăмсене вуларăм. Санăн куççулĕ те ыттисем пекех типмерĕ, – каласа пачĕ хăйĕн пирки кĕскен.

Çапла, Татьяна халăх хушшине тухса хăйĕн пултарулăхĕпе паллаштарма пултарать. Унăн сăввисем республикăри конкурса хутшăнма тивĕç пулчĕç, районта та пĕрре мар янăрарĕ. Ку çеç те мар, вăл çавăн пекех юрă-ташă ăсти. Çамрăклăх çулĕсенче алла баян, домбра тытма кăмăллана.

Обществăлла ĕçсене те активлă хутшăнать. Муркашри Культура çуртĕнче Элĕк, Хĕрлĕ Чутай, Етĕрне районĕсем хушшинче пулса иртнĕ художество пултарулăхĕн зонăри фестивальне хутшăнма кăмăл турĕ. Çавăн пекех пĕрре мар республикăри юрă-ташă, фольклор конкурсĕсенче пулчĕ.

Илем. Мĕнре-ши вăл илем?
Сăвă-юрăра, чечекпе

Ача-пăчара вăл илем! – тет вăл хăйĕн сăввинче. Чечек вăл паян çуралать те, ыран пуçне усать. Çапах та ăна кăмăлламан хĕрарăм çук та пулĕ. Çу кунĕсем çитсен пахчара тĕрлĕ-тĕрлĕ чечек лартма кăмăллать, хĕлле вара – пӳтре.

«Эпĕ пурнăçра пуçа усакансене, хуйхă-суйха эрех черккипе пусаракансене ăнланмастăп, сивлетĕп вĕсене. Хурлăх вăхăтĕнче “симĕс çĕлен” пирки шухăшлама вăхăт та çук”, – тесе вĕçлерĕ хăйĕн сăмахне. Çавăн пек пуçа усман маттур çынсенчен тĕслĕх илме вĕренесчĕ пирĕн.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: тарăн шухăша путсассăн, шăрçаланаççĕ сăвă йĕркисем.**

### Телейсĕр шăпа

Ăçта-ши эсĕ ман телейĕм,
Ăçта-ши эсĕ ман шăпам?
Те вăрмана пытантăн эсĕ,
Тен, хыççăнах эсĕ пыран?
Юлташлă-туслă эпĕ пулнă,
Анчах та юратса курман.
Тен, юратма та эпĕ маннă
Ача пекех улталансан?
Анчах эп шанчăка çухатмăп,
Пĕлетĕп, ман телей пурах.
Эп пурпĕр шанчăка çухатмăп,
Ĕненме тăрăшăп сана.
Эс юрататăп тен, чăнах-ши,
Ĕненме йывăр пит сана.
Пĕрре савса курса пулсассăн
Савма пултарăн-ши мана?
Анчах эп шанчăка çухатмăп,
Ĕненме тăрăшăп сана.
Эп пурпĕр шанчăка çухатмăп,
Пĕлетĕп, ман телей пурах.
Çапла, эс шăпаран иртеймĕн,
Пĕлместĕн, мĕн кĕтет сана?
Çапах сана саваç пуласассăн
Çĕр çинче лайăх пурăнма.

Конкурс иртнĕ

## Сывă кил – сывă çемье – сывă конкурс!



Ноябрĕн 24-мĕшĕнче Муркашра “Атте-анне, эпĕ – спорта туслă çемье” конкурс пулса иртрĕ. Унта ял тăрăхĕсенчен çичĕ çемье хутшăнчĕ. Программа анлă та интереслĕ пулчĕ, 5 конкурсран тăчĕ. Çакăнта хутшăнакан çемьесем тĕрлĕ халăх традицийĕсемпе паллаштарчĕç. “Хаваслă старт” конкурсра вара питĕ активлă пулчĕç.

“Вырăс мунчи” конкурса Оринин ял тăрăхĕнчи Прокопьевсен çемйи “Вĕренӳре те, ĕçрен те юлмастпăр эпир нихăçан” чĕнӳпе тухрĕ.

“Украина марафонĕ” конкурс çĕнтерӳçисем вара Москакасси ял тăрăхĕнчи Овчинниковсен çемйи пулчĕ. “Инди футболĕ” конкурсра Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи Андрияновсен çемйи мала тухрĕ. “Ковбой чупăвĕнче” Ильинка ял тăрăхĕнчи Бычковсем пĕрремĕш пулчĕç. “Чăваш вăййи” конкурсра тĕл перекенсем, хăвăрт чупакансем Муркаш ял тăрăхĕнчи Потаповсем палăрчĕç. Çавăн пекех Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Андушкинсен тата Шетмĕпуç ял тăрăхĕнчи Александровсен çемйисем аван тупăшрĕç. Палăртма кăмăллă, Александровсен çемье пуçĕ Шетмĕпуç ял тăрăхĕнче вăй хурать. Çапла майпа ыттисемшĕн те ырă тĕслĕх пулса тăрать.

Конкурса пĕтĕмлетнĕ май Прокопьевсен çемйи пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Иккĕмĕшсем – Овчинниковсем. Виççĕмĕш вырăна Потаповсен çемйи çĕнсе илчĕ. Çĕнтерӳçĕсене район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕ Л.И. Мочалов саламларĕç, асăнмалăх парнесем тата дипломсем парса чысларĕç. “Колокольчик” тата “Солнышко” шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсенчи ачасем юрă-ташăпа илем кӳчĕç.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Тимлĕх

## Тимлĕх ытларах пултăрччĕ

**Декабрĕн 3-мĕшĕнче пур çĕрте те Инвалидсен пĕтĕм тĕнчери кунне паллă тăваççĕ. Ăна Пĕтĕм тĕнчери Пĕрлештерĕнĕ Нацисен Организацийĕн Ассамблейи йышăннипе çак кун Раççей сĕннипе 1992 çултанпа иртерееççĕ. Пурнăçра кашнин шăпи хăйне май килсе тухать. Çапах та пурте кун-çула çирĕп сывлăхпа пурăнса ирттерес тĕллевлĕ. Инвалида çынсем тĕрлĕ сăлтавсене пула тухаççĕ. Паллах, вăл никамшăн та кĕтнĕ пулăм мар. Паянхи кун тĕлне районта 2403 инвалид пурăнать. Хальхи вăхăтра 34 инвалида социаллă ĕçченсем пăхса, пулăшса пыраççĕ, 22-шĕ ваттисен çуртĕнче пурăнать. Çак çулта 82 инвалидăн пурнăç условийĕсене тĕрĕсленĕ. Пурнăç чăнлăхĕ çапла, кашни çыннăн пурнăç шайĕ хăйне май. Çавăнпа та сахал тупăшлă 51 инвалида республика бюджетĕнчен 25,8 пин тенкĕлĕх пулăшу панă. Пĕччен пурăнакан 13 инвалида РФ Пенси фондĕнчен 13,0 пин тенкĕлĕх пулăшнă. 3 инвалида килте социаллă пулăшу парассине йĕркеленĕ, 4-шне интернат-çурта вырнаçтарнă, 3-шĕ ваттисемпе инвалидсен çуртĕнче хӳтлĕх тупнă.**

**Психоневрологи интернатне вырнаçтарма 4 инвалид валли кирлĕ документсем хатĕрленĕ. 4 ача республикăри реабилитаци центрĕнче пулнă, çавăн пекех 5-шĕ сывлăха çирĕплетмелли “Солнышко” лагерьте каннă.**

**2006 çулта социаллă политикăна аталантарас тĕллевпе чылай ĕç пурнăçланă. Инвалидсем хушшинче активлă çынсем нумай. Вĕсем обществăлла ĕçсене, тĕрлĕрен конкурссене тăтăшах хутшăнаççĕ. Çапла майпа республика шайĕнче район чысне хӳтĕлерĕç.**

**Инвалидсем РФ Пенси фончĕ урлă уйăхсерен тӳлекен укçана илсе тăраççĕ. Çавăн пекех социаллă пакетсемпе те усă кураççĕ, ЧР Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин районти социаллă хӳтлĕх пайĕ урлă коммуналлă услугăсемшĕн 50 процент сахалрах тӳлеççĕ. Пур инвалидсен те çул çинче çӳремелли пĕрлĕхлĕ социаллă билетсемпе усă курма ирĕк пур. Хамăр ĕçре эпир инвалидсене май пур таран пулăшу пама тăрăшатпăр.**

**О. ИВАНОВА, социаллă пулăшу паракан центр ертӳçи.**

Редакци почтинчен

## Тав тăватпăр

Пирĕн юратнă мăшăра, аттене, пиччене, мăçака, хуньстарике, хăтана – Муркаш ялĕнче пурăннă Вячеслав Ростиславович Савельева юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, пысăк хуйхăна пирĕнпе пĕрле пайланăшăн «Моргаушавтотехсервис» акционерсен уçă обществин ертӳçине Л.Д. Дмитриева тата унта ĕçлекенсене, выльăхсен чирĕсемпе кĕрешекен районти станци ертӳçине Н.С. Яковлева тата унта ĕçлекенсене, Е. Андреев яч. хис. хуçалăх ертӳçине Н.В. Рудакова тата хуçалăх ĕçченĕсене, ЧР Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин районти социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхне Н.П. Петрована, районти çар комиссариатне, чернобылецсене, «Рынок «Моргаушский» пасарта ĕçлекенсене, хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕнче ĕçлекенсене, хăйматлăх ашшĕпе амăшне, тăвансене, хурăнташсене, хăтипе тăхлачисене, кумсене, пускилсене чĕререн тав сăмахĕ калатпăр.

**Савельевсен çемйи, йăмăкĕсем.**

---

Пирĕн юратнă аннене, хуньамана Зоя Павловна Скворцована юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, пирĕн хуйха пĕрле пайланăшăн Муркаш райпо коллективне, «Гастроном» магазин ĕçченĕсене тата «Почта России» районти коллективне, ял-йыша, пускилсене, тăвансене чун-чĕререн тав тăватпăр.

**2 хĕрĕ, 1 ывăлĕ, кĕрӳшĕсем, кинĕ, мăнукĕсем.**

Декабрĕн 1-мĕшĕ – СПИДпа кĕрешмелли пĕтĕм тĕнчери кун

## Сыхланакана Турă та сыхлать

ВИЧ – инфекци, СПИД пирки хаçатра пĕрре мар çырнăччĕ. Тепĕр хут аса илтерни тата палăртни ытлашши пулмĕ. Раççейре пĕрремĕш ВИЧ-инфекциллĕ çынна 1987 çулта тупса палăртнă. Официаллă çăлкуçсем палăртнă тăрăх, Чăваш енри кăтартусем те савăнтармаççĕ. Пурĕ 690 çыннăнне ВИЧ тупса палăртнă, вĕсенчен 56-шне – юлашки 10 уйăхра. 72 çын вилнĕ, çав шутран 15-шĕ СПИДран.

ВИЧлисенчен ытларахăшĕ инфекци, ытти венери чирĕсем мĕнле ерме пултарассине пĕлменнипе, сывă пурнăç йĕркине пăхăнманнипе “капкăна” çакланать. Тĕнчери цифрăсем татах та хăрушăрах. Кашни кун тĕнчере 20 пин çынна СПИД вирусĕ ерет, 1 пин ача чирлĕ çуралать. Кашни сехетре СПИДран тĕнчере 300 çын вилет.

Пĕрремĕшĕ – юнпа. ВИЧлисенчен 80 проценчĕ – наркоман. Çын ВИЧлисемпе пĕрле шприцпа, йĕппе усă курсан ерет. Медицинăн таса мар инструменчĕсем урлă. Çакна пирсинг, татуировка тунă чухне асра тытмалла.

Иккĕмĕшĕ – ар çыхăнăвĕ урлă. Çавăнпа чирлес мар тесен яланах презервативпа усă курмалла.

Виççĕмĕшĕ – амăшĕнчен ачине. Çие юлсан ача çуратиччен е кăкăр ĕмĕртнĕ чухне куçма пултарать. Паянччен республикăра ВИЧ-инфекциллĕ амăшĕсенчен 57 ача çуралнă, вĕсенчен 8-шне инфекци куçнă.

Чирлисенчен ытларах пайĕ 15-25 çулсенчи çамрăксем. Вĕсенчен ытларахăшĕ сывă пурнăç йĕркине пăхăнманнипе, арлă-арăмлă пурнăçпа йĕркеллĕ пурăнманнипе чирленĕ. “Капкăна” ăнсăртран лекнисем те пур. Халĕ чылай çамрăк кăмăл-сипет саккунĕсене пăхăнмасть. Статистикăпа килĕшӳллĕн, мăшăрланиччен ар çыхăнăвне кĕменни сахал. Нумайăшĕ паянхи кунпа пурăнма тăрăшать, ыранхи пирки шутламасть. Ĕçкĕ-çикĕпе, наркотикпа туслашнисен шучĕ кунран-кун ӳссе пырать. Çамрăк чухне тем те тутанса пăхас килет. 15-18 çулсенче ВИЧ-инфекциленнисем вара вăтамран тепĕр 10-12 çултан пурнăçпа сывпуллашаççĕ. Мĕншĕн тесен ВИЧлĕ çын инфекци ертсен 10-12 çул, чи нумаййи 20 çул çеç пурăнать. Çамрăклах ар çыхăнăвне кĕни, час-часах савни улăштарни вара венери чирĕсемпе (вĕсем 30 ытла) чирлес хăрушлăха пысăклатать.

ВИЧ тупса палăртнă чухне ытларах шкул ачисемпе студентсем, служащисемпе рабочисем чирлени паллă. Вĕсенчен çуррине яхăн Мускава, ытти регионсене укçа ĕçлесе илме çӳрет. Хăшĕ-пĕри шăпах çавăнтан чир-чĕр “туянса” килет.

Нумайăшĕ ВИЧ тата СПИД пĕр диагноз тесе шутлать. Анчах та ку апла мар. ВИЧ – çын организмĕн хӳтлĕх тытăмне сиенлекен вирус. Çын организмĕнче çак вирус пулсан вăл ВИЧ-инфекциллĕ шутланать. Вăл 10-12 çул хушши хăйне сывă çын пек туйма, çав вăхăтрах ыттисене ертме пултарать. СПИД – ВИЧ-инфекцин юлашки тапхăрĕ. СПИД организма ытти чир-чĕрпе инфекцисене хирĕç тăрайми тăвать. Çав чирсенчен çын хальхи эмелсемпе усă курмасан 3 çултан ытла пурăнаймасть. Вируса аталанма чаракан препарат чылай, анчах хальлĕхе ВИЧран сывалма пулмасть. Çын чирлĕ пулни 3-6 уйăхран çеç паллă. Çав вăхăтра юн парсан организмра вирус пурри анализра палăрмасан та пултарать.

Юлашки çулсенче ирттернĕ тĕпчевсем çамрăксем ар çыхăнăвне ир кĕнине кăтартса панă. Иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенче 15 çула çитмен хĕрсен 15 проценчĕ çеç качча ыхăнăвне ир кĕнĕ. Çамрăклах арлă-арăмлă пурăнакан хĕрсен 55 проценчĕ сыхланмасть. Ку хырăм пăрахасси, венери чирĕсене ертесси патне илсе çитерет. Çулленех кашни пин çамрăкран иккĕшĕ сифилиспа, гонорейăпа чирлет.

Сывă пурнăç йĕркине пăхăнма, арлă-арăмлă пурăнакансене презервативпа усă курма, мăшăрсене улăштармалла маррине асра тытма хистетпĕр.

**Г. ФЕДОТОВА, районти тĕп больницăн врач-инфекционисчĕ.**


Пĕлтерӳсем. Объявления




**Закупаем по дорогим ценам: упитанных быков, телок, свиней, коров в живом виде; свинину.**
**Тел.: 60-662, 8-960-305-15-97, звонить в любое время суток. Герман. 2-3.**

**В Универмаге с. Моргауши новое поступление товаров: зимних курток, обуви, Чебоксарского и Ульяновского трикотажа, аудио-, видео- и бытовой техники, электроинструментов, обоев, панелей МДФ, Балахнинской мебели, шкафов, кухонных наборов и уголков, диванов, кроватей, ковров, парфюмерии, бытовой химии, подарков, детских игрушек и большой ассортимент разных товаров. Предлагаем предновогоднюю распродажу товаров, а также продажу товаров в кредит 0 %. Покупайте товары в Универмаге, цены у нас низкие!**

**Продаются козы породы «альпийские» безрогие. Тел.: 34-3-03 (звонить после 17-00). Макаров.**


СПК-племзавод «Свобода» правленийĕ нумай çул хушши çак хуçалăхра вăй хурса ĕçленĕ пенсионерка **Римма Романовна СКВОРЦОВА** вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх çыннисемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

СПК-племзавод «Свобода» правленийĕ нумай çул хушши çак хуçалăхра вăй хурса ĕçленĕ **Иван Гаврилович БЫЧКОВ** вилсе кайнă пирки çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Выльăх-чĕрлĕх чирĕсемпе кĕрешекен районти ветеринари станцийĕн коллективĕ кунта ветврачра ĕçлекен Э.В. Савельевăн ашшĕ **Вячеслав Ростиславович САВЕЛЬЕВ** вăхăтсăр вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

СПК-племзавод «Свобода» правленийĕ нумай çул хушши çак хуçалăхра вăй хурса ĕçленĕ Зинаида Тарасовна тата Юрий Арсентьевич Захаровсен юратнă ывăлĕ **АЛЕКСЕЙ** вилсе кайнă пирки çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.


ГУП ЧР “Моргаушский издательский дом”
Моргаушская районная газета “ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ”
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.
Директор-главный редактор А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,5 п. листа. Тираж 3364.
Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 01.12.2006 г.
Заказ
Дежурный по номеру БЕЛОВ А.П.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП ”ИПК ”Чувашия”: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.